# ТӐВАН ЛИТЕРАТУРА

5




Вĕренекен чăвашла вулатăр. Халăхăн ăсĕ-тăнĕпе унăн мĕн пур тĕнче курăмне тăван чĕлхе чун парать. Тăван чĕлхесĕр пĕлӳ çук.

*И. Я. Яковлев*

# ТĂВАН ЛИТЕРАТУРА

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

**5-мĕш класăн**
**вĕренӳпе вулав кĕнеки**

**Г. В. ЛУКОЯНОВПА В. Н. ПУШКИН**
**хатĕрленĕ**

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1998

## ЫРĂ КУН ПУЛТĂР, ПИЛЛĔКМĔШĔНЧИ АТНЕРСЕМПЕ ИЛЕМПИСЕМ!

Эсир, пиллĕкмĕш класра вĕренме пуҫлакан ачасем, кĕнекепе тахҫанах туслашнă ĕнтĕ. Кĕнеке вăл —этемлĕх пĕлĕвĕн пуянлăхĕ. Ăна уҫса вулатăр та темиҫе ҫĕр ҫул каялла пурăннă е хальхи ҫынсен пурнăҫне, вĕсен йăли-йĕркине, шухăшкăмăлне, ĕҫĕ-хĕлне, савăнăҫ-телейне, ĕмĕтне пĕлетĕр.

Эсир вуласа тухнă хайлавсем (произведенисем) шутĕнче, паллах, юмах нумай. Сире уйрăмах асамлă юмахсем килĕшеҫҫĕ. Мĕн вăл асамлăх, камсем вĕсем асамҫăсем — ун ҫинчен эсир аван пĕлетĕр.

Асамҫăсем юмахсенче кăна тĕл пулмаҫҫĕ. Эсир халĕ вĕренме тытăнакан ҫак кĕнекери хайлавсенче те асамҫăсемпе тĕл пулăр. «Тăван литература» вĕренӳпе вулав кĕнеки хăй те асамлă. Ҫакна илтсен эсир, тен, тĕлĕнĕр те. Анчах тĕлĕнме кирлĕ мар.Чи авалхи асамлăх вăл — сăмах асамлăхĕ. Сĕм авалхи ҫынсен ҫут ҫанталăк вăйĕсене куҫ пăвса, асамласа пăхăнтарма пулать текен шухăшлавĕнче ҫуралса аталаннă та ĕнтĕ япаласемпе пулăмсене ят пама, вĕсене пĕлтерекен сăмахсем шухăшласа кăларма пултарни.

Айтăр эпир те шухăшласа-уйласа пăхар. Хăвăр ума урамра вылякан ачасен ушкăнне кăларса тăратăр. Акă ҫывăхри кил хапхи уҫăлать те, хĕрарăм тухса тăрать. Вăл пĕр сăмах, пĕр ят ҫеҫ калать: «Сантăр!» Ҫакна илтсенех вылякан ачасенчен пĕри тӳрех амăшне сăмах каласа хуравлать те ун патне чупса пырать.

Халĕ ҫакăн пирки шухăшласа пăхăр. Эсир тин ҫеҫ арҫын ачана ятран чĕннĕ хĕрарăм (амăшĕ) ҫинчен вуларăр та, сирĕн ума урам тата вылякан ачасем тухса тăчĕҫ. Анчах умра телевизор ҫук-ҫке, мĕн пурĕ те «Тăван литература» кĕнеке кăна. Кĕнекере вара урамри ачасене сăнласа паракан ӳкерчĕк те ҫук. Ҫапах та вуланине йăлтах ӳкерчĕклесе курма пултартăр. Тинех ĕнентĕр пулĕ: сирĕн умра асамлă кĕнеке.

«Тăван литература» ытти вĕренӳ кĕнекисем пек мар. Ку кĕнекепе вĕренсе эсир чи авалхи асамлăхсен вăрттăнлăхĕсене пĕлме пултарăр, сăмах асамлăхне

# АСАМЛĂХ ТĔНЧИ

## САВĂ-ЮРĂ (ПОЭЗИ) ТĔНЧИН ПУÇЛАМĂШĔ

Сĕм авалах, çынсем тискер кайăк тирĕсемпе витĕнсе çĕр хăвăлĕсенче пурăннă чухнех, тăван-пĕтенĕ патне Сунарçă таврăннă. Çав кун уншăн питĕ ăнăçсăр пулнă. Вăл пĕр кайăка та, пĕр пăлана та ухă йĕппи е сăнă лектереймен. Çĕр хăвăлĕнчи хĕрарăмсемпе ачасем хăйне мĕнле кĕтсе илессе Сунарçă лайăх пĕлнĕ, тарăн шухăша ӳкнĕ.

Пушă алăпа таврăннă Сунарçă çĕр хăвăлĕнчи çунса пĕтеймен кăвайт тавра ларакан çынсем патне кĕрсе тăнă та калаçма пуçланă. Вăл вăрманта халиччен курман шурă юр тĕслĕ тискер кайăка тĕл пулни, ăна персе амантни, анчах суранлăскере тытманни çинчен каласа панă. Çав самантра тискер кайăк питĕ хитре арçын пулса тăнă та Сунарçăна ӳпкелеме тытăннă: «Эсĕ мана ахалех амантрăн, эпĕ Вăрман Турри пулатăп», — тенĕ. Сунарçă унран хăйне хĕрхенме ыйтнă, хăйне вĕлерсен те ăна сунара янă çынсене çилленмесĕр-тарăхмасăр каçарма тархасланă. Турă Сунарçăна каçарнă, анчах çав кун пĕр чĕр чуна та вĕлерме ирĕк паман.

Каласа пĕтерсен Сунарçă çынсен куçĕнче тарăхнине те, куляннине те курман. Çынсем ун çине чунтан хавхаланса пăхнă. Çул пуç хăй вырăнĕнчен тăнă, карас пылĕнчен пысăк татăк касса илнĕ те Сунарçăна тыттарнă.

Мĕнле шухăшлатăр: Сунарçă Çул пуçран мĕншĕн парне илме тивĕç пулнă? Пушă алăпа сунартан килнĕшĕн паман ăна. Хăйĕн çывăх çыннисене, палла тăрана тĕрĕсне каласа паманшăн илнĕ пек курăнать Сунарçă парнене. Анчах ăна тӳрех айăплама анваскăр. Сунарçă парнене пысăк ăсталăхшăн тивĕçнĕ. Вăл çынсене пуçласа илемлĕ юмах каласа панă. Çынсем çав юмаха ĕненнĕ. Юмах хывса ăста калама пултарнăшăн тивĕç пулнă вăл парне илме.

Мĕншĕн çимелли апат илсе килессе шанса ларакан çынсем Сунарçă юмаххалапне çапла кĕтсе илнĕ-ши? Мĕншĕн тесен çав вăхăтра çĕр хăвăлĕнче пысăк асамлăх пулса иртнĕ. Кăвайт тавра ларакансем сасартăк вăрманта тĕлĕнмелле хитре Вăрман Туррине куç умне кăларса тăратма пултарнă. Çынсем Сунарçă персе

# ХАЛĂХ
# САМАХЛĂХĔ

## МИФ МĔНЛЕ ÇУРАЛНĂ

Хаклă вĕренекенĕмĕрсем! Эсир тăван-пĕтенĕсене чăлт шурă вăрман чĕр чунĕ çинчен каласа кăтартнă Сунарçăна лайăх астăватăр. Малалла мĕн пулса иртнĕ-ши? Итлĕр-ха.

Калав йăх Çул пуçне питĕ тĕлĕнтерсе те пăшăрхантарса янă. Йăхри арçынсем пурте сунар ĕçĕпе пурăннă. Сунарçă каласа кăтартнă Вăрман Турри тискер кайăксене тытма чарас пулсан çынсем выçса вилме пултарнă. Уйласа-шухăшласа пăхнă хыççăн Çул пуç сунарçăсене аш-какай татăкĕсем илсе вăрмана кайма хушнă. Кунта вăрманти чулсенчен вучах тунă та илсе килнĕ аш татăкĕсене вут çинче пĕçернĕ. Çапла майпа Çул пуç Турра апатлантарса-çитерсе унран сунара çÿреме ирĕк ыйтса илме шутланă. Вăрман Турри çынсем мĕн тунине ăнланса илме пултартăр тесе Çул пуç хĕрарăмсене ăна мухтама тата йăха пулăшма ыйтма хушнă.

Сирĕнпе малтан паллашнă чухне эпир асамлă вăй çинчен асăннăччĕ. Çапла вара, Çул пуç Турра юрас тесе асамлă йăла шухăшласа кăларнă: вăл ăна апатлантарма-çитерме ăс тупнă (çак тĕллевпе ĕнтĕ вут çинче аш-какай пĕçернĕ). Çавăн пек йăлана Турра парне пани, чÿк туни тесе калама пуçланă. Вăрман Турри кама тата мĕн тĕллевпе чÿк тунине ăнланса илтĕр тесе çынсем ку йăлана юрăпа ирттернĕ.

Вучахра вут çуннă, ун çийĕн аш пĕçернипе тĕтĕм явăннă. Хĕрарăмсем вучах тавра тăрса Вăрман Турринчен хăйсен йăхĕнчи çынсене пулăшу пама тархасласа юрă юрланă. Хĕрарăмсенчен пĕри юрă пуçласа янă, кирлĕ сăмахсем пуçа пырса кĕреймесен ăна тепĕр хĕрарăм, унтан виççĕмĕш пулăшма васканă, асра юлмалла сăмахсем тупса вĕсене темиçе хутчен те каласа юрланă.

Çапла майпа йăхри çынсем Вăрман Туррине мухтакан юрă хывнă, ăна ăнăçлă сунар хыççăн кашнинчех вучахра аш татăкĕсем пĕçерсе Турра парнеленĕ чух юрланă. Ку йăла-йĕрке юрри пулса тăнă. Ăна савăнас, хавасланас тесе юрламан, вăл йăла-йĕрке ирттерме кирлĕ пулнă. Ку юрă вăрмантан Турра чĕнсе кăларма,

# ЛИТЕРАТУРА

# ЭПОС

# МĔН ВĂЛ ЛИТЕРАТУРА

Хаклă ачасем! Ку таранччен эсир халăх сăмахлăхĕн сăмах вĕççĕн çӳрекен хайлавĕсемпе паллашрăр, малалла литература хайлавĕсене вĕренме тытăнатпăр. Мĕн-ха вăл литература? *Литература* тени латин чĕлхинчи *литера* (чăвашла — сас палли) сăмахран пусланса кайнă. Вăл хут çине çырса хунă хайлав тенине пĕлтерет. Анчах хут çине çырнă пур тĕрлĕ çырăва та литература теме çук-ха. Литература вăл — çынсене, халăха кирлĕ, усăллă ĕçсем çинчен илемлĕ çырнă хайлавсем. Тĕрлĕ литература пулать: илемлĕ литература, наука литератури т. ыт. те. Тăван литература урокĕсенче эпир илемлĕ литература вĕренетпĕр.

Мĕн вăл илемлĕ литература? Акă пирĕн алăра «Нарспи» ятлă кĕнеке. Ăна пирĕн халăхăн чаплă сăвăçи К. В. Иванов çырнă. Кĕнекене пĕрре тытсан вуласа тухмасăр та аларан ярас килмест.

Мĕншĕн вăл пире тӳрех тыткăна илет-ха? Чи малтанах çакна каламалла: кĕнекен чĕлхи çăмăл, илемлĕ, сăнарлă, пурне те ăнланмалла. Вуланă чухне пирĕн куç умне хамăра çывăх çынсем, ӳкерчĕксем тухса тăраççĕ. Акă эпир пĕр-пĕрне юратакан Нарспипе, Сетнерпе, хăй кĕтĕвĕ патĕнче шăхлич калакан ачапа, лашалла вылякан Сенттипе, çут çанталăкăн çуркуннехи тата çуллахи тĕрлĕрен ӳкерчĕкĕсемпе паллашатпăр. Сăвăç хĕл иртни, çуркунне пĕтĕм тавралăх, йывăç-курăк чĕрĕлни çинчен илемлĕ, чĕрĕ ӳкерчĕклĕ, асра юлмалла çырса кăтартать. Çав паха сăнсемпе ӳкерчĕксем пирĕн чĕрере ырă шухăш-туйăм хускатаççĕ. Сăвăç кĕнекере çынсен ĕçченлĕхне, ырă йăли-йĕркине, паттăрлăхне мухтать, усаллипе киревсĕррине сивлет. Çавăнпа эпир К. В. Ивановăн «Нарспи» поэмине илемлĕ литература хайлавĕ тетпĕр.

Илемлĕ литературăн çынсен пурнăçĕнчи пĕлтерĕшĕ питех те пысăк. Вăл пире хамăрăн кулленхи пурнăçа лайăхрах ăнланма, пĕлме, унăн илемне туйма, асăрхама, курма, шухăшлама вĕрентет.

Илемлĕ литература хайлавĕсене çыравçă пурнăçа мĕнле туйăмпа сăнласа



# КОНСТАНТИН ИВАНОВ
## (1890—1915)

Кирек мĕнле чăваш та мĕн кĕçĕнрен Константин Васильевич Иванов ятне ăша хывса çын пулать. «Çакă çутă тĕнчере вăйли çук та этемрен», — тесе çырнă çапçамрăк сăвăç çыннăн кăмăл-туйăм хăватне ĕненсе. Константин Васильевич нумай пурăнайман пулин те чăваш поэзийĕн классикĕ ята тивĕçнĕ. Чăвашсем ăна чăн-чăн халăх сăвăçи тесе хаклаççĕ. К. Иванов çырнă хайлавсем чăваш литературине пуянлатнă, ăна малалла аталантарнă.

Пулас сăвăç 1890 çулхи çу уйăхĕн 27-мĕшĕнче хальхи Пушкăртстанра Пелепей районĕнчи Слакпуç ялĕнче çуралнă. Пуçламăш шкултан вĕренсе тухнă, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче пĕлӳ илнĕ. Унта вăл питĕ лайăх вĕреннĕ. Çамрăк Кĕçтук питĕ нумай вуланă. Чĕмпĕрти шкул хуралçи халап-юмаха ăста пулнă. К. Иванов юлташĕсемпе пуçтарăнса çав ватă çын каласа панă халапсене итлеме юратнă. Тăван ялне каникула кайсан та сăвă-юрă итленĕ, кăмăла килнисене çыра-çыра илнĕ. Кĕçех вăл хăй те сăвăсем çырма пуçланă. Халăхран илтнĕ халапсене тĕпе хурса вăл 16 çулта чухнех «Пăртта ачи-пăчи» ятлă халап çырма пуçлать. Каярах вăл нумай сăвă, юмах çырнă. «Икĕ хĕр», «Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм» — унăн чи ăста хайлавĕсем.

Халăх чĕрине уйрăмах тыткăнлаканни вара унăн чаплăран та чаплă «Нарспи» поэми. Халăх пурнăçне, унăн шухăш-ĕмĕтне, чун-кăмăл туртăмĕсене ĕнентерӳллĕ кăтартса витĕмлĕн сăнарлама пултарни вулакана пĕрре тĕлĕнтернĕ, тепре савăнтарнă. Чăваш чĕлхи унпа типтерлĕ, пĕлсе усă курсан мĕн тери çепĕç те илемлĕ, витĕмлĕ те сулмаклă, пуян иккен.

Константин Васильевич Иванов пултарулăхĕ, унăн чĕлхи пуянлăхĕ, сăвă ăсталăхĕ чăваш çыравçисемшĕн тĕслĕх пулса тăчĕ. Паян кун та çамрăк çыравçăсем унăн çыпăçуллă, илĕртӳллĕ, янăравлă хайлавĕсене вуласа, вĕренсе çĕнĕ ăста хайлавсем çырма хавхаланаççĕ.

Талантлă çыравçă йывăр чирлесе 1915 çулхи пуш уйăхĕн 26-мĕшĕнче вилнĕ. Ăна тăван ялĕнче пытарнă.

7. Заказ № К-1222

# ЛИТЕРАТУРА

# ЛИРИКА

## МĔН ВĂЛ ЛИРИКА

Мĕн-ши вăл лирика? Илтнĕ-и эсир сăвă-юрă юратакан, такмакласа ташлама кăмăллакан çепĕç чунлă çын пирки тепĕр чух шӳтлерех «вăл лирик чунлă этем» тенине? Мĕншĕн çапла калаççĕ-ши? Лирикăлла произведенисем çыннăн чун-чĕринчи туйăмĕсемпе шухăшĕсене уçса параççĕ. Çак хайлавсенче çынсене сăнарлани те, вĕсен ĕçне-хĕлне е пурнăçне, тĕрлĕрен пулăмсене кăтартса пани те çук. Кунта сăмах куçа курăнман, тытса, алăпа хыпаласа пăхма çук япаласем пирки пырать. Лирикăра авторăн чун-чĕринчи кăмăл-туйăмĕ, шухăш-ĕмĕчĕ тĕп вырăна тухать. *Лирикăлла произведенисем* тесе авторăн кăмăл-туйăм хусканăвĕ витĕр пурнăçа, йĕри-таврари тĕнчене сăнласа паракан хайлавсене калаççĕ. Лирикăлла хайлав пĕр уйрăм çыннăн кăмăл-туйăмне çеç мар, авторпа пĕр шухăш-ĕмĕтлĕ çынсен чун туртăмне те палăртать. Çавăнпах лирикăлла произведенисем нумай вулакана хумхантараççĕ, шухăша яраççĕ.

Лирикăлла произведенин илемлĕх тĕнчи — автор кăмăл-туйăмĕн, чун кăмăлĕн хусканăвĕсем, пăлханăвĕсем. Пурнăçăн пĕтĕмĕшле паллисем, халăхăн чун-кăмăл хавалĕ лирикăлла хайлав авторĕн кăмăлĕ витĕр сăнарланса-кĕвĕленсе тухать. Анчах та автор хăйĕн туйăмĕсене тӳрремĕн палăртмасть. Вулакан чĕринче сăвăç илемлĕ сăнарсем урлă хăйĕн чун-чĕринчи кĕвĕсемпе килĕшӳллĕ кăмăл çуратма тăрăшать. Лирикăлла хайлавсенче çыравçăсем хăйсем çут çанталăк илемĕпе киленсе рехетленнĕ е юратупа, туслăхпа тулнă кăмăлне, философилле шухăшлавсене тата кăмăл-туйăмăн тĕрлĕрен хусканăвне палăртаççĕ. Çавăнпа лирикăна ытларах чухне виçĕ пысăк ушкăна уйăраççĕ: çут çанталăк е пейзаж лирики, чун-чĕре е интимлă лирика тата шухăш-кăмăл лирики.

Чăваш литератури лирикăлла поэзипе яланах пуян пулнă. И. Ивникăн, П. Хусанкайăн, В. Урташăн, Я. Ухсайăн, Г. Ефимовăн т. ыт. нумай поэтсен çепĕç, чуна хумхантаракан лирикăлла сăввисем тăван литературăра сумлă вырăн йышăнаççĕ. Халăх вĕсене юратса вулать, кăмăллăн чуна хывать. Мĕншĕн тесен çав лирикăлла

# ЛИТЕРАТУРА

# ДРАМА

# ТЕАТР ТАТА ДРАМА

Хаклă вĕренекенĕмĕрсем! Пирĕнпе юнашарах хăйне евĕр асамлă тĕнче вырнаçнă, унта ирĕклĕ шухăшлав вĕçевĕн саккунĕсем вăйра тăраççĕ. Çак асамлă тĕнчере пурăнакансене илемлĕ хайлава вуланă чухне ăсра сăнарламасăрах илтме, курма пулать. Асамлă юмах тĕнчине лекес е ырă сăнарсемпе усаллисен хаяр кĕрешĕвне ху куçупа курас тесен театра кайса спектакль çеç курмалла. Литературăпа театр пĕр-пĕринпе çав тери тачă çыхăннă, паян вĕсене пайăррăн уйăрма та хĕн. Анчах та театр ĕмĕрĕпех паянхи пек пулман. Пĕрремĕш «театр вылявĕсем» авалхи тĕн йăли-йĕркисене пурнăçланă чухнехи тĕрлĕрен вăйăсемпе ташăсем, çав йăла-йĕркене тытса, ертсе пыракан чӳк пуçĕсен, тĕрлĕрен юмăç, шамансен хусканăвĕсемпе ташшисем пулнă. Паллах, ун чухне çав тĕн йăли-йĕркинчен хăйне уйрăм ăсталăх, ӳнерлĕх аталанса çитĕнесси пирки никам та шухăшламан та, ăнланман та. Çав ташă-хускану театр шайне çĕкленесси мĕнле пулса пынă-ха? Чăн-чăн театр шайне çĕкленме халăх йăли-йĕркисене пурнăçланă чухне ташлакан, сиккелекен, хуçкаланакан çынсем çеç пулни çителĕксĕр. Театрти вылява йĕркелеме ятарлă артистсем тата геройсен сăмахĕсене малтанах çырса хатĕрлени кирлĕ. Апла пулсан артист выլявĕпе илемлĕ литература пĕрлешсе ӳнерĕн тепĕр тĕсне аталантарнă, ăна *драматурги* теççĕ. Драматурги вăл литературăн уйрăлми пайĕ, анчах та ахаль вулама мар, сцена çинче выляма, спектакль лартма палăртнăскер. Паллах, кун пек калани пьесăсене вулама юрамасть е вуланă чухне чун киленĕвĕ, пăлханăвĕ хускалмасть тенине пĕлтермест. Драма произведенине сăвă, калав е повесть вуланă пек вулама йывăртарах, мĕншĕн тесен унта çынсен сăн-сăпатне сăнарлани, геройсене автор характеристика пани çук. Театрта спектакль лартма ятарласа тунă япаласене, актерсен тумтирне, вĕсен тыткаларăшне куç умне кăларса тăратма шухăшлав хастарлăхĕ вăйлă аталанни кирлĕ. Театрта спектакль пынă чухне вара çакă пĕтĕмпех куракан кусĕ умĕнче пулса иртет. Сцена çинче лартма мар,




Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен:
Шывсем çинче, çĕр çинче
Хуçа пулса вăл тăрать.

*К. В. Иванов*